27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944 СЕНТЯБРЬ 20 ЮНКУН 186(681) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАСЛЕННИКОВА

БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, тăшман оборонине татнă та паян, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, ВАЛГА хулипе пысăк чугун çул узелне — нимĕçсен Эстонин кăнтăр пайĕнчи оборонин питĕ вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ.

Тăшман оборонине татнă чухне тата ВАЛГА хулине тытса илессишĕн çапăçнă чухне РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, МАРТЫНЧУК генерал-майорăн, СТЕПАНЕНКО генерал-майорăн, БУНЬКОВ генерал-майорăн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорăн, НИКИШИН генерал-майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, КОЗИН генерал-майорăн, ШКЕЛЬ полковникăн, ШИРЯЕВ полковникăн, АЛЕКСЕЕНКО полковникăн, ДУДОРОВ полковникăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, БУРЛАКИН генерал-майорăн, ПОЛЯКОВ генерал-майорăн, МИРОНЕНКО полковникăн, РОДИОНОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕВИНĂН, ЛЕОНОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВĂН, ФАСТРИЦКИЙ полковникăн, ЯНКЛОВИЧ полковникăн, МОЗАЛЕВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, КАМОРНЫЙ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОЛОСОВĂН, ИВАНОВИЧ полковникăн, ОВСЯННИКОВ полковникăн, МЖАЧИХ подполковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, КИБАЛЬ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖУРАВЛЕВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ФИЛИНĂН, ПОЛУШКО полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ГРАШЕНКОВ полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, ПОДМОГИЛЬНЫЙ полковникăн, КУЛИШ подполковникăн, ЯКОВЛЕВ майорăн, ЗЛОЧЕВСКИЙ подполковникăн, РАССКАЗОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КИРЧЕВСКИН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЧЕПУРОВĂН, СЕРГЕЕВ полковникăн, МАРЧАК полковникăн, РОГОВИЧ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВĂН, КОРПЛЯКОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ДРОБКИС подполковникăн, КОСОБОКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен оборонине татнă чухне тата ВАЛГА хулине тытса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах палăрнă соединенисемпе чăссене «ВАЛГИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, тăшман оборонине татнăскерсене тата ВАЛГА хулине тытса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн тата ВАЛГА хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, тăшманăн РИГА хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вăйлă та нумай ретрен тăракан оборонине татнă, тăватă кун хушши наступлени туса пырса, 40 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 120 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем нимĕçсен оборонин çирĕплетнĕ паха пункчĕсене — БАУСКА, ИЕЦАВА, ВЕЦМУЙЖА ятлă пунктсене тата Хĕвеланăç Двина çинче — ЯУНЕЛГАВА, ТЕКАВА пункчĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 2.000 пункта ытла йышăннă.

Тăшман оборонине татнă чухне БЕЛОБОРОДОВ генерал-лейтенантăн, МАЛЫШЕВ генерал-лейтенантăн, ВАСИЛЬЕВ генерал-лейтенантăн, ПРОКОФЬЕВ генерал-майорăн, ИБЯНСКИЙ генерал-майорăн, САМАРСКИЙ генерал-майорăн, СОЛДАТОВ генерал-майорăн, ЧЕРНИКОВ генерал-майорăн, ГОРОДИНСКИЙ генерал-майорăн, ДИБРОВ генерал-майорăн, КУДРЯВЦЕВ генерал-майорăн, ШКУРИН генерал-майорăн, ЛУЦКЕВИЧ генерал-майорăн, БИРШТЕЙН полковникăн, ГОНЧАРОВ полковникăн, СИНИЦЫН полковникăн, ГРЫЗЛОВ генерал-майорăн, ВЕРБОВ полковникăн, КУЧЕРЯВЕНКО генерал-майорăн, КРАСНОВСКИЙ полковникăн, ДРУЖИНИН полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, ВЛАСОВ генерал-майорăн, СВЕТЛЯКОВ генерал-майорăн, САВЧЕНКО полковникăн, БЕЛОВ генерал-майорăн, ПАШЕНКО полковникăн, ВЛАДИМИРОВ полковникăн, ПОТАПЕНКО генерал-майорăн, ХВОСТОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ХЛЕБНИКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ШЕГЛОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БАЖАНОВĂН, АХНАЗАРЬЯН полковникăн, МЕЛЬНИЧУК полковникăн, ДАНИЛИН полковникăн, артиллери генерал-майорĕн СТАРОСТИНĂН, СОБОЛЕВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн БОГДАНĂН, ПРОКОПОВ полковникăн, КРАСИЛЬНИКОВ подполковникăн, МИРОНОВ полковникăн, ЧАПАЕВ полковникăн, ПАВЛИКОВ подполковникăн, ЧАЙКОВСКИЙ полковникăн, КУЗЬМИН полковникăн, ПОНОМАРЕВ полковникăн, МИХАЛЕВ полковникăн, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, ОСОКИН полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СКОРНЯКОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОБУХОВĂН, МЕНЬШЕВ полковникăн, ФИЛИППОВ полковникăн, ПОДКОВСКИЙ полковникăн, САДОВСКИЙ полковникăн, МАНЖУРИН генерал-майорăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн КРЕМЕРĂН, СТАРОДУБЦЕВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн АСЛАНОВĂН, КАЛИНИН полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ПАПИВИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВĂН, СКОК полковникăн, КУРБАТОВ полковникăн, КУЧМА полковникăн, ЧУМАЧЕНКО полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ полковникăн, ПЛАХОВ полковникăн, МАРТЬЯНОВ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОСАРЕВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛМАКОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн РАЗВОЗОВĂН, КОРОТКОВ полковникăн, СТЕЧИЩИН полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БАБКИНĂН, ЗАХАРОВ полковникăн, ЗАЙЧИК полковникăн, ЮРИН подполковникăн, ЦОЛБОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшманăн РИГА хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри оборонине татнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

ЯЛСЕМ ВАЛЛИ КУÇСА ÇӲРЕКЕН ÇĔНĔ ЙЫШШИ КИНОАППАРАТСЕМ

Кино промышленноçĕн предприятийĕсем ялсем валли çĕнĕ йышши куçса çӳрекен саслă киноаппаратсем тума пуçланă.

Самарканд хулинчи «Кинаш» завод çĕнĕ йышши киноаппаратсен пĕрремĕш ушкăнне туса кăларнă. Çав киноаппаратсен сасă вăйĕпе çутă вăйĕ хальхи аппаратсеннинчен ытларах. Çĕнĕ киноаппарат экрана хальхинчен 20 процент вăйлăрах çутатать.

Кăçал ялсем 3.000 çĕнĕ киноаппарат туянассĕ. (ТАСС).

Тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе хăвăрт вĕçлер, Ленин орденлĕ республика ятне çӳлте тытар!

„Трактор килсен çĕмĕрттерсе тăкатчĕ те-ха"

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Кĕрхи çĕртме — çитес çулхи тырпулăн никĕсĕ. Çакна Ишлей районĕнчи çĕрĕç пайĕн руководителĕсемпе колхоз председателĕсем лайăх пĕлеççĕ. Анчах çĕртме сухине кирлĕ пек йĕркелессишĕн тăрăшмаççĕ. Çĕртме сухи кунта иккĕмĕш черетпе тумалли ĕç шутланать. Государствăна тырă парса тататпăр, вара сухалама тытăнатпăр, теççĕ чылай колхозсенче.

«Августăн 1-мĕшĕ», «Хĕрлĕ Явăш», Калинин тата Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем çĕртме сухи тума тытăнман. «Кун пеккисем татах та пур-çке, пĕр теçеткене те çитет иккен...»—тет райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Лазарев юлташ, сводка тăрăх шыраса.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем МТС çине шанаççĕ. Трактор килсен çĕмĕрттерсе тăкатчĕ те-ха, теççĕ. Сăмахран, «Сархорнай» колхоз трактора кĕтсе ларать. Пурĕ те икĕ гектар çеç сухаланă. «Трактор» колхоз çĕртме тума тытăнман та. Анчах МТС çине шанни вырăнлă пулĕ-ши? Тем, Ишлей МТС-ĕ кăçал тухăçлăн ĕçлени курăнмарĕ-ха.

Кĕрхи çĕртме тума тухнă колхозсем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Вĕсем те 6—7-шер гектар çеç сухаланă. Графика тултарса пыракан колхозсем пĕрре те çук. Çавăнпа ĕнтĕ ку таранччен 1.144 гектар çеç сухаланă. Районăн татах 5.000 гектар ытла сухаламалла. Çĕр шăнса ларсан сухалĕç-ши ишлейсем?

Т. ИВАНОВ.

Шурка ялсоветĕнчи колхозсем юлса пыраççĕ

КУКЕÇ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Шурка ялсоветĕнчи «Культура» колхоза кăçал район енчен чылай пулăшу панă. Государствăна тырă турттарма вĕсене автомашина уйăрса панă, юнашар колхозсем туртăм тата ĕç вăйĕ парса пулăшнă. Анчах темле пулăшсан та, хăйсем тăрăшман пирки ĕç малалла каймасть. Колхоз паянхи куна çитсе те çуртыррисемпе пăрça йышши культурăсене пухса кĕртмен.

Кĕлте турттарма тытăнман та. Колхозăн ĕç лашисем ыттисеннипе пĕр пекех пулсан та, кĕрхи тырăсене кая юлса тата агротехникăна пăсса акрĕç. Çавăн пекех государствăна тырă парасси те юлса пырать, çуррине кăна леçнĕ-ха. Авăна сӳрĕккĕн çапаççĕ. Тепĕр чухне молотилкăпа виçĕ кун хушшинче те 200 килограмран ытла çапаймаççĕ.

Калас пулать, колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини питех те япăх. Вĕсем ирхине ĕçе 8—9 сехет иртсен çеç тытăнаççĕ.

Çак ялсоветри «Победа» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те çавăн пекех сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Анчах ялсовечĕ (председателĕ С. Чуваков) çак колхозсене ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмасть. Çак тарана çитсе те агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелемен. Вулав çурчĕн заведующийĕ уборка пуçланнăранпа колхозниксене пĕр хутчен те хаçат вуласа паман, стена хаçачĕ кăларас ĕçе организацилемен. Çавăн пекех комсомолецсемпе учительсем те массăллă-политикăллă ĕçе хутшăнмаççĕ.

М. НИКИТИН.

Çамрăксен авăн çапакан бригади

СЕНТЕР. Шупуç ялсоветĕнчи «Коммунар» колхозра авăн çапма комсомолецсемпе çамрăксенчен ятарласа уйрăм бригада тунă. Авăн çапнă çĕрте 14—15 çамрăкран кая мар ĕçлеççĕ. Ку бригадăна 2-мĕш бригадăн бригадирĕ, вăлах комсомол организацин секретарĕ М. Мазикова юлташ ертсе пырать. Вĕсем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

(Хамăр инф).



Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республик ăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Сĕнтĕрвăрри районĕ тăрăх:

16. «Красная Армия» колхоз (председателĕ Анкудинов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Базарова юлташ). Вăл тырăсене августăн 25-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата çапса пĕтернĕ. Кĕраки планне кĕске срокрах пурнăçланă. Государствăна памалли тырпулсене парса татнă.

17. «Новая деревия» колхоз (председателĕ Вдовин юлташ). Колхоз тĕштырăсене августăн 25-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырă парса татнă.

18. «1-ое мая» колхоз (председателĕ Егорова юлташ). Çак колхоз 126 гектар çинчи тĕштырăсене сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, çĕнĕ тырра пĕтĕмпех çапса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварнă. Государствăна памалли культурăсене парса татнă.

19. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васильев юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Лебедев юлташ). Ку колхоз районра чи малтан тырă вырса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă. Кĕрхи тырăсене вăхăтра тата лайăх акса хăварнă.

Пĕр кунта 2.781 центнер тырă леçнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). ВКП(б) райкомĕн пуçарăвĕпе иртнĕ вырсарникун, сентябрĕн 17-мĕшĕнче, районра государствăна тырă леçес тĕлĕшпе воскресник пулса иртрĕ. Воскреснике пурĕ 928 колхозник хутшăннă. Вĕсем çав кун хатĕрлев пунктне 2.781 центнер тырă леçнĕ.

Воскресник кунĕнче «Янмурзино», «Красное Сормово» колхозсенчен 40-шер лавпа, Карай ялсоветĕнчи «Большевик» колхозран 38 лавпа, «Коминтерн» колхозран 30 лавпа тырă леçме кайнă.

«Красная звезда» колхоз 258 центнер, колхозниксем 130 центнер çĕрулми леçсе, государство планне тултарнă.

Çĕрулми парса татнă

СЕНТЕР. Шашкар ялсоветĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх вăхăтĕнче государствăна çĕрулми памалли плана тултарчĕ. Колхоз тырă парас тĕлĕшпе те графика ытлашшипех тултарса пырать.

(«Ĕç ялавĕ»).

Чурачăк районĕнчи «Çĕнĕ вăй» колхозра авăн çапаççĕ.
Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ФИНЛЯНДИПЕ ПЕРЕМИРИ ТУНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

Сентябрĕн 14-мĕшĕпе 19-мĕшĕ хушшинче Мускавра Совет Союзĕпе Великобритани представителĕсем Финлянди Правительствин делегацийĕпе Финляндипе перемири тăвасси çинчен калаçнă. Совет Союзĕпе Великобритани представителĕсем Финляндипе вăрçакан Пĕрлешӳллĕ нацисен ячĕпе калаçнă. Çав калаçусене Совет Союзĕ енчен çаксем хутшăннă. В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов, А. А. Жданов, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, генерал-полковник С. М. Штеменко, контр-адмирал А. П. Александров; Великобритани енчен — Посол Керр господин тата Советник-Посланник Бальфур господин. Финлянди представителĕсем пулса çав калаçусене Финлянди Правительствин çак уполномоченнăйĕсем хутшăннă: ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ К. Энкель господин, çар министрĕ Р. Вальден генерал, Генеральнăй Штаб начальникĕ Э. Хейнрихс генерал тата О. Энкель генерал.

Калаçусем сентябрĕн 19-мĕшĕнче Финляндипе перемири тăвасси çинчен Килĕшӳ тунипе вĕçленнĕ. Çав перемири пирки тунă Килĕшĕве Совет Союзĕпе Великобритани Правительствисем хушнипе А. А. Жданов генерал-полковник алă пуснă.

Финлянди енчен çав Килĕшĕве К. Энкель господин, Р. Вальден генерал, Э. Хейнрихс генерал тата О. Энкель генерал алă пуснă.

Перемири çинчен калакан Килĕшĕвĕн тексчĕ уйрăмăн пичетленсе тухать. (ТАСС).

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Вунă уйăхри плана срокчен тултарассишĕн

ÇЕМĔРЛЕ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ, август уйăхĕнчи производство планне срокчен тултарса, Пĕтĕм Союзри ăмăртура малти вырăна тухма пултарчĕ. Çавăншăн ăна ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕ иккĕмĕш преми панă.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе каланине пичетленĕ хаçатсене илсенех комбинатри цехсенче пухусем пулса иртнĕ. Цехсен коллективĕсем сентябрь уйăхĕнчи плана 28 кун хушшинче пурнăçа кĕртме сăмах панă. Халĕ рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем тăваççĕ. Договорсенче вунă уйăхри плана срокчен тултарма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма пулаççĕ.

Комбинат коллективĕ кулленхи графика ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Цехсен ăмăртăвĕнче Павлов юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ малта пырать.

ВЦСПС-па Топливо промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па Топливо промышленность Халăх Комиссариачĕ предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулти август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура мала тухнă Атăл леш енчи торф кăларакан предприяти коллективне виççĕмĕш преми — 10.000 тенкĕ памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

САНОК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Дрогобыч облаçĕнчи район центрне — УСТРИКИ ДОЛЬНЫЕ ятлă хулапа чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — НАДОЛЯНЫ, НОВОТАНЕЦ, БУКОВСКО, КАРЛИКУВ, КУЛАШНЕ, МЫЧКОВЦЫ, БУБРКА, ЛОБОЗЕВ, УСТЯНОВА ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 134 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 62 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ДЕБРЕЦЕН ТАТА САТУ-МАРЕ ХУЛИСЕМПЕ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Сентябрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгрири Дебрецен хулипе чугун çул узелне тата Çурçĕр Трансильванири Сату-Маре хулипе чугун çул узелне йышлăн вĕççе кайса тапăннă. Совет самолечĕсем нимĕçсемпе венгерсен çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Дебрецен чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, нумай тĕлте пушарсем тухнă, вĕсенчен пилĕк пушарĕ питĕ вăйлă пулнă. Чугун çул вагонĕсемпе платформисем, çавăн пекех тата пысăк горючи склачĕ çуннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе боеприпас склачĕ сирпĕнсе кайнă.

Сату-Маре чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, 30 тĕлте ытла пушар тухнă. Пушарсенче взрывсем нумай пулнă. Горючи усракан вырăнсемпе çар склачĕсем сирпĕнсе кайнă.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН ТИНĔС АВИАЦИЙĔ ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) ПОРТНЕ ТАПАННИ

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Лепая (Либава) портне тапăннă, тăшманăн çав портра тăракан суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула, тăшманăн пĕтĕмĕшпе 12.000 тоннăна çити таякан виçĕ транспорчĕ тата нимĕçсен виçĕ подводнăй лодки шыва путнă. Унсăр пуçне, вĕсен икĕ пысăк транспортне тата ишсе çӳрекен докне сиенленĕ. Портра вăйлă пушарсем тухнă. Тăшманăн çар пурлăхĕ тăракан складсем çуннă.

Сывлăшри çапăçусенче порт районĕнче совет летчикĕсем нимĕçсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Иелгава (Митава) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман пехоти тата танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен пысăк вăйĕсем темиçе хут та пирĕн позицисене атакăланă. Хăйсен çыннисем темĕн чухлĕ пĕтнине пăхмасăр, нимĕçсем пирĕн оборонăна татса, Иелгава хули патне тухма хăтланнă. Тăшман атакисем пурте пăчланса ларнă. Совет пехотинецĕсемпе артиллерисчĕсем тăшмана сирсе янă, хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. 600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 13 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Унсăр пуçне тата тăшманăн 11 танкĕ пирĕн минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайнă.

Пирĕн авиаци, бомбăсем пăрахса тата штурмласа, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухату кӳнĕ. Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 23 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Санок хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Тăшман, оборонăра тăма лайăх позицисемпе усă курса, хытă хирĕç тăнă. Дрогобыч облаçĕнчи Устрики Дольные ятлă район центрĕшĕн уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсем Камена Лаворля ятлă тăва вăйлă çирĕплетнĕ. Çав ту çинчен вĕсем хулана пымалли мĕнпур çулсемпе çырма çатрасене артиллерирен тата миномётсемпе, пулеметсемпе персе тăнă. Хулара тăшман танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пухса хатĕрлесе тăратнă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсене атакăланă та тăшманăн Камена Лаворля тăвĕ çинчи укреплениĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Алă вĕççĕн пуçланса кайнă тытăçура совет боецĕсем 400 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, темиçе артиллери батарейине тытса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Устрики Дольные хулине туртса илнĕ. Пĕр соединени чăçĕсем шоссе çулĕсен Буковская ятлă узелне тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене туртса илнĕ.

* * *

Сентябрĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Çурçĕр Норвегири Киркенес портне тапăннă. Бомбăсем порт территорийĕнчи сооруженисене тата нимĕçсен çар склачĕсене тӳрех пырса тивнипе пилĕк тĕлте пушар тухнă. Темиçе тĕлте вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Нимĕçсен «Трансоцеан» агентстви сентябрĕн 17-мĕшĕнче çакăн пек хыпар пĕлтернĕ: «Çамрăксене фабрикăсенче, чугун çулсем çинче тата ытти предприятисенче ĕçлеме ямашкăн Совет Союзĕнче пур университетсене, аслă шкулсене тата наукăпа тĕпчев институчĕсене те хупаççĕ», тенĕ.

Совет Союзĕнче аслă шкулсене хупаççĕ тесе суя хыпар сарса, гитлеровецсем пысăк намăс курчĕç. Çак вăрçăн чи йывăр тапхăрĕсенче те Совет Союзĕнче университетсем тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăнă. Юлашки вăхăтра фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хуласенче 120 аслă шкула çĕнĕрен юсаса ĕçе янă. Сăмахран, Ростоври университет, Новочеркасск хулинчи индустри институчĕ, Киеври политехника институчĕ, Харьковри университет тата ытти хуласенче те нумайĕшĕнче çавăн пек аслă шкулсем çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă. Октябрĕн 1-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи аслă шкулсенче вĕрентме пуçлаççĕ. Совет халăхĕ малалли пурнăç çине хăюллăн пăхать, хăй валли промышленноçăн мĕнпур отраслĕсенче, ялхуçалăхĕнче, культурăпа наука тĕлĕшпе ĕçлеме кадрсем хатĕрлет. Çав вăхăтрах фашистсен Германийĕнче, çĕнĕ сверхтотальнăй мобилизаци ирттернине пула, чăн-чăнах мĕнпур аслă шкулсене хупса лартнă, кирлĕ мар тесе, наукăсене пăрахăçа кăларнă. Çавăн пирки ĕнтĕ Гитлер ирсĕрĕсем тĕрлĕрен суя хыпарсем сараççĕ. Вĕсем Германире кăна мар, Совет Союзĕнче те аслă шкулсене хупнă тенине ĕненекен ухмахсем тупăнассине шанаççĕ. Ытла та ухмахла хăтланаççĕ вĕсем. Тăнĕсем йăлтах пĕтсе çитнĕ Гитлер суеçисен. Кунсеренех вĕсем ухмахрах та ухмахрах сӳпĕлтетсе суйма пуçларĕç.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Советски райкомĕ марксизм-ленинизм вĕренĕвне ертсе пымасть

Вăрçă кунĕсенче Советски районра, республикăри ытти районсенчи пекех, партине совет, комсомол организацийĕсенче тата хуçалăх органĕсенче ĕçлеме çамрăк работниксем нумай хутшăннă. Вĕсен политикăллă пĕлĕвĕ тата ертсе пырас ĕçри опычĕ пысăк мар. Апла пулсан, çамрăк кадрсене марксизм-ленинизм вĕрентĕвне алла илме пулăшас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕн [illegible] ĕçлемелле. [illegible]

[illegible]

ланассе. Апла пулин те, ВКП(б) райкомĕ çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе пачах та ситтелĕксĕр ĕçлет. Тĕрĕслесе илсен, унта кандидатсем хăйсен вĕренĕвне, хăйсен ĕçри квалификацине мĕнле ӳстересси пирки никам та интересленмест. Çавна пула вара çамрăк коммунистсем, уйрăмăн ВКП(б) членне кандидачĕсем, общественнăй пурнăçран юлса пыни палăрать.

Акă, Госбанкăн районри отделенийĕнче главнăй бухгалтерăн помощникĕ пулса ĕçлекен Васильева юлташа илер. [illegible]

— Пире нумай вăхăт ушкăн пухмарĕç-ха, — тет. [illegible]

[illegible]

юлташ юлашки вăхăтра марксизм-ленинизма вĕренме пачах пăрахнă. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче вăл пĕр кĕнеке те вуласа тухман. Сталин юлташăн Отечественнăй аслă вăрçă çинчен çырнă кĕнекине те пăхса кăна тухнă.

Политикăллă вĕренĕве уйрăмăнах çамрăк коммунистсем хушшинче начар йĕркеленĕ. Районри парторганизацинче тăракансенчен çуррине яхăн ВКП(б) ретне тин çеç кĕнĕ çынсем, ВКП(б) членĕн кандидачĕсем шут-

[illegible] лемелле пулнипе витме пикенеççĕ. Çавăнпа пулас, ВКП(б) райкомĕ кăçалхи 8 уйăх хушшинче политикăллă воспитани çинчен пĕр ыйту та сӳтсе-явман.

ВКП(б) райкомĕпе пуçламĕш парторганизацисен марксизм-ленинизма вĕренессине ертсе пырас ĕçе çак çывăх кунсенчех тĕпрен çĕнетсе лайăхлатмалла.

И. ВАСИЛЬЕВ,

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн инструкторĕ.

Художествăллă галлерея уçăлас умĕн

Çывăх вăхăтрах Шупашкарта художествăллă галлерея ĕçлеме тытăнать. Ун валли Роза Люксембург урамĕнчи 1-мĕш номерлĕ çурта уйăрса панă.

Халĕ галлерейăна организацилес тĕлĕшпе ĕçсем пыраççĕ. Галлерея çуртне юсаса йĕркеленипе пĕрлех, П. Полежаев художник ертсе пынипе, историллĕ картинăсене йĕркелеççĕ. Ку таранччен Левитанăн «Одуванчики» ятлă, Бенуа çырнă «Хĕрарăм портречĕ», Н. Сергеевăн «Атăл çинче» тата ытти картинăсене юсаса йĕркеленĕ. Вăл картинăсене галлерейăн çутă тата пысăк пӳлĕмĕсене лартаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне галлерейăра Хĕвеланăç Европăри, революцичченхи Российйăри искусствăн картинисем тата чăваш хресченĕсен пурнăçне кăтартакан совет живописĕн картинисем пулаççĕ. Вĕсем хушшинче Тагаев художникăн «Сквозь строй», Зайцевăн «Акатуй» тата Спиридоновпа Сверчковăн картинисем пулаççĕ.

Галлерейăна курма пыракансем унта Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса паракан скульптурăна, йывăç çине касса çырнă картинăсене, чăваш тĕррисене, чăваш художникĕ Г. Данилов эскизĕ тăрăх тĕрлесе тунă Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн портретне тата ытти картинăсене те курма пултараççĕ.

Галлерейăна уçнă май художниксен мĕнпур картинисене тишкĕрсе тухмалла тăвас пулать. Художество тĕлĕшĕнчен начар картинăсене пăрахăçланипе пĕрлех, художество фончĕ валли историллĕ картинăсене тĕплĕн тата ытларах суйласа илмелле.

Шупашкарта 17-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче тунă воевода çурчĕ пур. Ăна юсаса йĕркелеме кирлĕ условисем çителĕклĕ. Çавăнпа та Искусство управленийĕн çав çурта юсаса йĕркелес тата унта художествăллă музейăн филиалне уçас ыйтăва хальтерех татса памалла.

Художник П. ПОЛЕЖАЕВ.

КОЛХОЗНИК 4.600 МИНАНА СИЕНСĔРЛЕТНĔ

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне фашистла нимĕç оккупанчĕсем колхозсен хирĕсенче минăсем нумай лартса хăварнă.

Ростов облаçĕнчи Неклиновски, Куйбышевски, Анастасиевски тата ытти районсенче те çав минăсене тупса сиенсĕрлетес тĕлĕшпе колхозниксен бригадисем ĕçлеççĕ. Неклиновски районри «Путь Ленина» колхозăн 57 çулхи колхозникĕ Шкурюс юлташ колхоз хирĕсенче тата колхозниксен пасмисенче 4.600 минăна сиенсĕрлетнĕ. (ТАСС).

Çынсене пĕтермелли Майданекри лагерьте нимĕçсем тунă тискер ĕçсем

Люблин хулинчи Майданекри çын вĕлермелли лагерьте нимĕçсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлмешкĕн 1944 çулхи август уйăхĕнче Польшăпа Совет Союзĕн Чрезвычайнăй Комиссине тунăччĕ. Çак кунсенче çав Комисси хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ, тĕпчесе пĕлнин результачĕсем çинчен вăл пĕлтерӳ пичетлесе кăларчĕ.

«Люблин хулинче нимĕçсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлме тунă Комисси палăртни,—тенĕ çав пĕлтерӳре,—хăйĕн тискерлĕхĕ енчен пăхсан, фашистла нимĕç захватчикĕсен пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăракан çав тери тискер ĕçĕсенчен те ирттерет». Люблинри Майданекра гитлеровецсем çынсене вĕлермелли çав тери пысăк комбинат туса хунă. Çав лагерьте ĕçленĕ нимĕçсем, тыткăна лекнĕскерсем, çапла каласа панă: эпир хамăр çав лагере «фернихтунгслагерь» тесе ят паначчĕ, урăхла каласан—çынсене пĕтермелли лагерь, тенĕччĕ.

«Майданек» ятлă лагерь Польшăра Люблин хулинчен икĕ километрта ларать. Вăл 270 гектар çĕр йышăнса тăрать. Ăна 1940 çул пĕтеспе тума пуçланă. 1943 çул пуçланнă тĕле çав лагерĕн ултă хирне туса çитернĕ. Кашни хирĕнче 24 барак пулнă, пĕтĕмпе 144 барак пулнă (ку хисепе çав лагерьти служба çурчĕсем кĕмеççĕ), кашни барака 300 çын таран, е унтан та ытларах çын вырнаçнă. Пĕтĕм лагерь тавра тата çав лагерьти кашни хир тавра пралук карса çавăрăннă, çав пралук тăрăх вара вăйлă электричество токĕ янă.

Çав лагерьте пĕр вăхăтрах 25.000 çынтан пуçласа 40.000 çынна çитиччен вырнаçма пултарнă. Хăшпĕр чухне унта 45.000 çынна çити те пурăннă. Çав лагерьте тупнă йышлă паспортсемпе урăх тĕрлĕ документсем тăрăх, «лагерь лазаретĕнче» вилнĕ çынсене çырса пынă кĕнеке тăрăх, свидетельсем каланă тăрăх, çавăн пекех тата тыткăна илнĕ нимĕçсем каласа панă тăрăх çакна пĕлнĕ: çав лагерьте Польшăн ĕлĕкхи çарĕнчен тыткăна лекнĕ çынсене, тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата Польша, Франци, Бельги, Итали, Голланди, Чехословаки, Югослави, Греци, Дани, Норвеги тата ытти çĕршывсен гражданĕсене хупса усранă.

Лагере хупнă çынсен йышĕ улшăнмасăр тăман. Унта пурăннă çынсене тăтăшах вĕлерсе пынă, вĕсем вырăнне вара гитлеровецсем Европăри оккупациленĕ çĕршывсемпе районсенчен çĕнĕ те çĕнĕ ушкăнсене хăваласа пынă. Çав çынсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай пулнă. Çапла вара, çав лагерь унта хупма янă çынсен пысăк пайĕшĕн вилес умĕн вăхăтлăха пурăнмалли вырăн çеç пулса тăнă.

Çав лагерьте çынсене пĕтермелли система пулнă. Çав системăн чи хăрушă майĕсенчен пĕри — питĕ хытă режим пулнă: выçлăх, вăй çитерейми ĕç, мăшкăлланни. Унта хупнă çынсем выçă пурăннă. Пĕчĕк айăпа кĕнĕшĕнех вĕсене темиçе кунлăха пĕр апатсăрах тăрата-тăрата хăварнă. Вĕсене вăй çитерейми ĕç ĕçлеттернĕ, ирхине 4 сехетрен пуçласа каçхине тĕттĕм пуличченех ĕçлеттернĕ. Нимĕç хуралçисем хăйсен жертвисене темле майпа та мăшкăлланă: вараланчăк шыва путарнă, хыçалалла çыхса лартнă аллисенчен çакнă, вĕсене çака-çака хунă тата ытти те.

Тĕпчесе пăхса çакна пĕлнĕ: нимĕçсем çав лагерьте хăйĕнче те, унăн çывăхĕнче те (Кремпецки вăрманта) çынсене йышлăн пере-пере вĕлернĕ. Сăмахран, 1941 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче 2.000 çынна яхăн персе вĕлернĕ, 1942 çулхи хĕлле — тыткăна лекнĕ совет çыннисене 5.000 çынна яхăн персе вĕлернĕ. 1942 çулхи кĕркунне — Польша çарĕнчен тыткăна лекнĕ çынсене 4.000 çынна яхăн персе вĕлернĕ. 1943 çулта çулла Хĕрлĕ Çарăн 300 офицерне персе вĕлернĕ. 1943 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче 18.400 çынна персе вĕлернĕ. Çакăн пирки çав лагерĕн администрацийĕ Берлина «Зондерсбеандлунг» (ятарласа тунă ĕç) ятлă доклад çырса янă. Çав докладра çапла каланă: «Лагерьте усракан çынсен ирхинехи хисепĕпе каçхи хисепĕ хушшинчи уйрăмлăх—18.000 çынна ятарласа пĕтерсе тăкнипе пулнă», тенĕ.

Çынсене йышлăн вĕлерсе пĕтермелли чи сарăлнă майсенчен пĕри — СО газĕпе (углерод окисĕпе) тата «циклон» (синильнăй кислота) ятлă химиллĕ-наркăмăшлă япалапа чыхăнтарса вĕлересси пулнă. Лагерь территорийĕнче 6 газ камерине тупнă. Лагере хупнă çынсене тата «душегубка» ятлă автомашинăра вĕлернĕ. Çав лагерьте ĕçлесе пурăннă нимĕç—«СС» обершарфюрерĕ Тернес çапла каласа панă: 1943 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче газ камерисенче 500 çынна вĕлернĕ, çав çынсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай пулнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, çав камерăсенче çакăн чухлĕ çынна чыхăнтарса вĕлернĕ: 1942 çулхи октябрьте—чирлĕ хĕрарăмсемпе ачасен пĕр пысăк ушкăнне, 1943 çулхи март уйăхĕнче—250 хĕрарăмпа ачана, 300 поляка тата тĕрлĕ халăхсен 300 çыннине, 1943 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче — 350 çынна, 1943 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче — 270 çынна.

Хăйсен преступленийĕсене пытарас тесе, нимĕçсем хăйсем вĕлернĕ çынсен виллисене çунтара-çунтара янă. Çав вилĕсене çунтарма лагерь территорийĕнче 1942 çул пуçламăшĕнчех икĕ кăмака туса хунă. 1943 çулхи кĕркунне тĕлне 5 кăмакаллă çĕнĕ питĕ хăватлă крематори туса лартнă. Çав вăхăтран пуçласа вара вăл кăмакасене пĕр чарăнмасăр хутса тăнă. Çакăнпа пĕрлех нимĕçсем тата вилĕсене кăвайтсем çине хурса çунтарнă. Комисси çакна тĕпчесе пĕлнĕ: крематори кăмакисенче, Кремпецки вăрманта тата лагерьте хăйĕнче те кăвайтсем çинче 1.380.000 вилле ытла çунтарса янă. Гитлеровецсем çав вилĕсен кĕлне шăтăксене, канавсене тăкнă, лагерьти пахчасем çине сапаласа пăрахнă, унпа хирсене çемçетнĕ. «Çынсене пĕтермелли лагерьте» 1.350 кубометр ытла компост тупнă, çав компост вăл тислĕкрен, çунтарса янă вилĕсен кĕлĕнчен тата çынсен вак шăммисенчен пулнă.

Çак ĕçсем чăнах та пулнине Люблин хулинче çар коменданчĕ пулнă нимĕç — Германи çарĕн генерал-лейтенанчĕ Гильмар Мозер çирĕплетсе панă. Нимĕçсем лагере тытса хупнă çынсене çаратнă, вĕсенчен тытса илнĕ япаласемпе пурлăхсене лайăх сортласа хурса, Германие янă. Лагерьти калама çук пысăк складра асаплантарса вĕлернĕ çынсен — арçынсен, хĕрарăмсен тата ачасен атă-пушмакĕсене 820.000 мăшăртан ытла тупнă, гестапо складĕнче (Люблин хулинчи Шопен урамĕнче) кĕпе-йĕм тата çынсен ытти япалисене калама çук нумай тупнă. Çак çаратса пухнă пурлăх Гитлерăн вăрă-хурахла государствин тата унăн преступникла руководителĕсен тупăшĕ пулса тăнă.

Люблинри çынсене пĕтермелли лагерь фашистла Германи Европăри çĕршывсенчи, çав шутра Польшăри, тата Совет Союзĕн оккупациленĕ облаçĕсенчи граждăнла халăха йышлăн вĕлерсе пĕтермелли хагĕр пулса тăнă, вăл славян халăхĕсен малта пыракан активлă пайне пĕтерсе тăкмалли май пулнă. Польшăпа Совет Союзĕн Чрезвычайнăй Комиссийĕ çакна пĕлнĕ: çынсене пĕтермелли «Майданек» ятлă лагере тунăранпа 4 çул хушшинче гитлерла пуçкасакансем, хăйсен преступникла правительстви хушнипе, тыткăна лекнĕ совет çыннисене, Польшăн ĕлĕкхи армийĕнчен тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата Европăри тĕрлĕ халăхсен граждăнĕсене миллион çурă çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

Çак калама çук тискер ĕçсемшĕн пуринчен ытла çаксем айăплă: Германин гитлерла правительстви, обер-палач Гиммлер тата Люблин воеводствинче вĕсем лартнă çынсем. Граждăнла халăха çавăн пек йышлăн вĕлерсе пырса, фашистла нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ çĕршывсен халăхĕсем хăйсене хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене чуралантарма тăрăшнă.

Польшăпа Совет Союзĕн Чрезвычайнăй Комиссийĕ Германири гитлерла правительствăн «Майданек» лагерĕнче тискер ĕçсем тунă çыннисене те палăртнă. Хăйсен «фюрерĕсемпе» пĕрле вĕсене тивĕçлипе айăпласа наказани парĕç. Фашистла чунилленсем ответ тытасран пăрăнса юлаймĕç. Ирĕклĕхе юратакан халăхсем, Совет Союзĕ, Англи тата США ертсе пынипе, фашистла тискер кайăкăн йăвине аркатса тăкĕç, фашистла нимĕç ирсĕрĕсене хăйсен мĕнпур тискер ĕçĕсемшĕн наказани парĕç. (ТАСС).

СОВЕТ МОЛДАВИН ПРАВИТЕЛЬСТВИ КИШИНЕВ ХУЛИНЕ КУÇНĂ

Молдаван Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совет Президиумĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Коммунистсен Партийĕн Центральный Комитечĕ, Комсомолăн Центральный Комитечĕ тата республикăн центрти ытти учрежденийĕсем те Сороки хулинчен Молдаван ССР-ĕн столицине Кишинев хулине тавраннă. (ТАСС).

Румынире Антонеску маршалăн ушкăнне тата Германи командованийĕн представителĕсене тытса хупнă

Антонеску маршалăн ушкăнĕ тата Германин Румынири çар представителĕсем вăрçă преступникĕсен списокне кĕртме тивĕçлĕ кандидатсем пулма пултараççĕ тесе, Румынири совет çарĕсен командованийĕ çаксене арестленĕ: 1) И. И. Антонеску маршала, 2) Румынин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă М. А. Антонескуна, 3) çар министрĕ пулнă К. К. Пантази генерала, 4) шалти жандармерин генерал-инспекторĕ пулнă К. З. Василиуна, 5) Бухарест полицийĕн префекчĕ пулнă М. С. Элефтерескуна, 6) нимĕçсен Румынире экономика ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ посолне К. Клодиуса, 7) нимĕçсен Румынири çар миссийĕн начальникĕ пулнă кавалери генералне Э. Ганзена, 8) нимĕçсен Румынири тинĕс-çар сыхăнăвĕн штабĕн начальникĕ пулнă В. Тиллессен адмирала, 9) нимĕçсен Румынири сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ пулнă А. Герстенберг генерал-лейтенанта, 10) 1944 çулта нимĕçсен Варшава коменданчĕ пулнă Р. Штагель генерал-майора.

Румынипе тунă перемири çинчен Румыни министрĕ калани

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Патрашкану министр пичет представителĕсене çапла каланă:

«Румыни халăхĕ тĕрĕссине пĕлмелле. Пĕтĕмпе пĕлмелле. Румыни халăхĕн чăн интересĕсене хирĕç туса пынă çак вăрçăра Румыни аяла пулчĕ. Румыни çарĕсем Кавказа кĕрсе кайнăччĕ, Сталинград патне çитнĕччĕ, Крыма тата Днестр леш енне оккупациленĕччĕ. Антонескупа унăн режимĕ Румыни халăхне, çапла, Гитлерпа пĕрле преступленисем тăвас тата çаратас ĕçе хутшăнтарнă. Преступникла руководительсем пирĕн çара Бессарабире, Днестр леш енче тата Одессăра, Нальчик хулипе калмыксен çеçенхирĕсем патне çитиччченех, темиçе çĕр пин çынна вĕлерттерчĕç. Антонеску вăрă-хурахĕсемпе тарçисен шайккисем облаçĕ-облаçĕпе çаратса тухрĕç, лабораторисене çĕмĕрчĕç, вилнисене çаратса çӳрерĕç. Çак ĕçсене пурне те вĕсем Румыни халăхĕ ячĕпе тунă. Эпир Мускава пырсан çакна куртăмăр: вăрçă Украинăра иртсе, çĕмĕрсе хăварнине кашни совет гражданинĕ асра тытать. Августăн 23-мĕшĕ иртни виçĕ эрне çеç çитрĕ. Çак вăхăт юлашки виçĕ çул хушшинче тунă тискер ĕçсен йĕрĕсене шăлса лартма çителĕклĕ тесе кам калама пултарĕ-ха?»

Перемири условийĕсем çинчен каласа парса, Патрашкану малалла çапла каланă:

«Румыни халăхĕ халь перемири условийĕсене пĕлет ĕнтĕ. Çав условисене пурне те тата пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле. Румыни, ĕнерччен Совет Союзĕн тăшманĕ пулса тăнăскер, Совет Союзĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен ытти халăхсен чăн-чăн союзникĕ пулса тăрĕ. Пирĕн çĕршывăн шалти ыйтăвĕсем çинчен çапла каламалла: сăмахпа мар, чăннипех демократиллĕ режим туса хуни çеç, пирĕн государство аппаратĕнчен тата пĕтĕм обществăллă пурнăçран ĕлĕкхи режимăн пур учрежденийĕсене те тата фашистсемпе вĕсем майлă ĕçленĕ çынсене пурне те хăваласа кăларсан çеç Румыни халăхĕ, перемири килĕшĕвĕ тăрăх, Румыние ирĕклĕ те никама пăхăнман çĕршыв туса хума пултарĕ».

Америка хаçачĕсем Румынипе тунă перемири условийĕсем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем пурте Румынипе тунă перемири условийĕсем çăмăл условисем пулса тăнине палăртаççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат уйрăмах çакна палăртать: перемири договорĕ çине союзниксем пĕрле алă пусни—вĕсем хушшинче пĕрлĕх пуррине кăтартса парать, тет.

«Лару-тăрăва пĕтĕмĕшпех шута илсен, çапла каламалла,—тет хаçат:—çав условисем—йывăр условисем мар. Чăн та ĕнтĕ, çав условисем вĕсем Итали умне тăратнă условисенчен çăмăлтарах пек туйăнма пултараççĕ. Анчах та вĕсене пĕр паха факта — Румыни союзниксемпе пĕрле çапăçма, çапла майпа хăйĕн айăпĕсене сирсе яма килĕшнине шута илсе тăратнă».

«Сан» хаçат (вăл Нью-Йоркра тухса тăрать) Румынипе тунă перемирин условийĕсем çăмăл условисем пулнине палăртать. Çав хаçат каланă тăрăх, перемири условийĕсем союзниксен тĕллевĕпе килĕшсе тăраççĕ, союзниксен тĕллевĕ — никама пăхăнман правительствăсем, тĕрĕслĕхлĕ чикĕсене йышăнса, хăйсен ятне вараламасăр упраса тăма тата мир тытса пыма пултаракан правительствăсем туса хурасси пулать.

Америкăри паллă радиокомментатор Серджио хăйĕн радиопа каланă сăмахĕнче Италипе тата Румынипе тунă перемирисен условийĕсене пĕр-перинпе танлаштарса пăхнă. Серджио çапла каланă: Румынипе тунă перемирин условийĕсем (вĕсене Англипе Америка ырланă) демократиллĕрех условисем пулса тăраççĕ, тенĕ.

«Вашингтон Стар» хаçат та перемири условийĕсем çăмăл условисем пулнине тата союзниксем хушшинче пĕрлĕх пуррине палăртса парать.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче йышлă сывлăш-çар вăйĕсем сывлăшран çав тери пысăк операцисем туса ирттернĕ хыççăн, Голланди çĕрĕ çине союзниксен авиадесант çарĕсем аннă. Малтан килнĕ хыпарсем тăрăх, çав операци унта ăнăçлăн пулса пырать.

Союзниксен Бельгипе Голланди чикки çывăхĕнче кĕрешекен çарĕсем малалла куçса пыраççĕ. Унтан кăнтăртарахра Аахен хули тулашĕнче тăшманăн хирĕç тăракан вырăнĕсене пĕтерсе тăкнă. Çав хулара вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тăшман хулан хĕвелтухăç енчи хĕрринелле куçса пыракан союзниксен чаçĕсене хирĕç хытă çапăçать.

Союзниксен çарĕсем Люксембургпа Германи чикки районĕнче те малалла кайнă.

Бельфор коридорĕн районĕнче нимĕçсем çаплах хаяррăн çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсем Сен-лу-сюр-Семуз хулине йышăннă тата Люр хулине тăшмантан тасатнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, Адриатика секторĕн сулахай флангĕнче, туллă вырăнта 8-мĕш арми чаçĕсем чылай малалла кайнă, вĕсем Марано шывĕ çинчи 8 миля тăршшĕ фронтри укреплениесене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕнчи Америка, Англи, Инди тата Бразили чаçĕсем «Гот линийĕнчи» позицисем çинче тăшманпа çаплах хаяррăн çапăçаççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем ĕнер Будапешт хулинчи чугун çул станцине тата нефть тасатакан заводсене тапăннă. Тактика авиацийĕ тăшманăн Çурçĕр Италири, çапăçусен районĕнчи тата Югославири çулйĕрĕсене, пĕр çĕре пухăна-пухăна тăнă çарĕсене тата ытти вăрçă объекчĕсене те пыра-пыра тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Бремен хулине тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, вăйлă пушарсем тухнă. «Ланкастер» йышши самолетсем Голландири боеприпассен складне тапăннă. Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн тĕрлĕ объекчĕсене тапăннă. Çак ĕçе 1.250 бомбардировщик хутшăннă. Вĕсенчен пĕри те пĕтмен.

НИМĔÇСЕМ КРИТ УТРАВĔНЧЕН КАЯЛЛА КУÇСА КАЯÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каир хулинчен Грецин информаци бюровĕ пĕлтернине парать. Пĕлтерӳре çапла каланă: нимĕçсем Крит утравĕ çинчен каялла куçса каяççĕ, тенĕ.

ШВЕЙЦАРИ ХАÇАЧĔСЕМ ГЕРМАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Сюисс» хаçат Германири халăхăн шухăш-кăмăлĕсем çинчен çапла пĕлтерет: вăрçă мĕнпе пĕтесси пирки нимĕç халăхĕ хăйне хăй улталамасть. Пур çĕрте те çынсем калама çук хытă ывăнни палăрать. Стенасем çинче вăрçа хирĕç çырнă сăмахсене час-часах курма пулать. Гитлеровецсем çынсене ытларах та ытларах тытса хупаççĕ тата судпа айăплаççĕ. Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн рейхстаг членĕсем пулнă çынсене, фашистсемсĕр пуçне, пурне те тытса хупнă.

Германире ют çĕршывсенчен ирĕксĕрлесе илсе пынă 12 миллион рабочи пурри гитлеровецсене пуринчен те ытларах хăратать. Нимĕçсем хăйсем каланă тăрăх, çав рабочисенчен 80 пинĕ çĕршывра суя документсемпе пытанса пурăнаççĕ. Ишĕлнĕ хуласенчи ишĕлчĕк куписем хушшинче нимĕç çарĕнчен тарнă 100.000 çын пытанса пурăнать. Пĕр-пĕр ют çĕршыв рабочийĕ пирки вăл Германие хирĕç тăрать пуль тесе шутлама май пулсанах, çавăн пек кашни рабочие судсăр-мĕнсĕрех вĕлереççĕ.

Швейцарире тухакан «Журналь де Женев» хаçат каланă тăрăх, Германире пĕрпĕрне саламлама йышăннă формăран кулнăшăн нумай офицерсене тытса хупнă. Вĕсене тăлланă та тĕрмене пăрахнă. Юлашки икĕ эрне хушшинче гитлеровецсем 30.000 çынна тытса хупнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ГАЛЬМАГЕРА ТАТА ПАЛАУ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Çĕнĕ Гвинея утравĕнчен 300 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Гальмагера утравĕсем çине пырса аннă. Карапсемпе авиаци хӳтĕленипе усă курса, союзниксен çарĕсем Моротай утравĕ çинче укреплениесем тунă (Моротай утравĕ вăл—Гальмагера утравĕсен ушкăнĕнчи чи çурçĕрте ларакан утрав). Япони çарĕсем хирĕç тăнине союзниксен çарĕсем часах сирсе янă. Союзниксен çарĕсен çын сахал пĕтнĕ. Союзниксен авиацийĕпе флочĕн нимĕнле çухату та пулман. Çарсем антарас ĕç халĕ те пырать.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕсем Филиппин утравĕсенчен хĕвелтухăçнерехре ларакан Палау утравĕсен ушкăнĕнчи Ангаур утравĕ çине аннă та тытса илме палăртнă объектсене пурне те тытса илнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн вăтаçĕрти пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн тинĕс пехотин чаçĕсем Палау утравĕ çинчи Пелелу аэропортне тытса илнĕ. 4.000 японеца пĕтерсе тăкнă. Хаяр çапăçусем халь те пĕтмен. Авианосецсем çинчи самолетсем çĕр çинчи çарсене активлăн пулăшса пынă.

Гальмагера утравĕсем çинче Америка çарĕсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата аэродром тума пуçланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

сентябрĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕнче

«Б У Д Н И»

ятлă илемлĕ фильм

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:

12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах

«Щ И Т Д Ж У Р Г А Я»

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм

кăтартма пуçлаççĕ.

10181002-мĕш номер комсомол билечĕ

Хытар кăмăлна, хисеплĕ юлташăм! Вут чулĕ пек çирĕп чунлă пулса, вуласа тух çак йĕркесене. Пăх ак çак çурма-çунăк комсомол билечĕ çине. Куççуль ан тумлатăр санăн куçăнтан. Хаяр çилĕпе вĕри курайманлăх çĕкленсе тухтăр кăкрунтан.

Акă вăл, ĕмĕр вилми геройăн сăнарне упраса хăварнă пĕчĕкçĕ кĕнеке. Ăна тăван халăхăн паттăр ывăлĕ, гварди салтакĕ Петр Пугачев хăйĕн чĕри çумĕнче çĕклесе çӳренĕ. Çав пĕчĕк билетпа вăл чи пуçламĕш хут пурнăç алăкне уçса кĕнĕ, тăван халăхшăн, çĕршывшăн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн çапăçма сăмах панă.

Вăл çамрăк пулнă. Ирĕклĕ пурнăçа, савăнăçлă хĕвеле, иксĕлми телейпе тапса тăракан çутă кунçула юратнă. Шавлă комсомол пуххисенче ларнă чух, хавасла таиташĕсемпе вăйăра çӳренĕ чух, е кĕрхи вăрăм каçсенче хăй юратнă кĕнекесене вуланă чух çак кăвар чĕреллĕ йĕкĕт, комсомолец Петр Пугачев юмахри пек пысăк телей тупсăмне тупма шутланă пулĕ, нумай вĕреннĕ çын пулса, пурнăçăн чи çӳллĕ тӳпине çитме ĕмĕтленнĕ пулĕ.

Анчах пирĕн çутă ĕмĕте юнлă Гитлер касса татрĕ. Лăпкă çĕршывăмăр шинеле тăхăнчĕ. Халăх çичĕ ютран килсе тапăннă вăрă-хураха хирĕç тухрĕ. Çавăн чух вара тăван çĕршыв вунсакăр çулхи йĕкĕт Петр Пугачев аллине те автомат шанса панă. Ленинла комсомол членĕ Петр Пугачев, 10181002-мĕш № билета кăкăр умĕнчи кăсйине чикнĕскер, тăван халăх кунçулĕн шанчăклă хуралĕ пулса тăнă.

* * *

Совет воинĕсем тăшмана каялла хăваласа пыраççĕ. Юнлă бандитсем, пирĕн хĕçпăшал вăйне чăтаймасăр, вăрттăн хушăкçурăксемне те пулин шăвăнса тухма шутлаççĕ. Анчах хура çĕр йăтайми айăпран вĕсем ниçта тарса та хăтăлаймĕç!

Командовани пĕр ушкăн гвардеецсене белофинсен çулне пӳлме приказ парать. Харсăр капитан Хабеков вунниллĕк комсомолеца илет те противник батальонĕн çулне татма çапăçăва ертсе каять.

Тăшман вăйран тухнă пулин те, тискер кайăкăнни пек асавĕсене шаккама пăрахман-ха. Вĕсем нумайăн, пирĕн гвардеецсем вунниллĕкĕн кăна. Анчах гварди салтакĕ патнихăçан та каялла чакмасть. Юлашки патрон юлмиччен çапăçрĕç пирĕн харсăр гвардеецсем. Юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçрĕ пирĕн тăванăмăр паттăр комсомолец Петр Пугачев. Вăл пĕр пĕччен кăна çак йывăр çапăçура вăтăр ытла бандита пĕтерсе тăкнă. Анчах та пуля ăна хăйне те питĕ йывăр амантнă. Вара гитлерла çынçиенсем ăна, суранланса халран кайнăскерне, чĕреллех тыткăна илсе, вут çинче çунтарса янă. Унăн тăрă çăлкуçĕ пек тап-таса та кĕске пурнăçĕ татăлнă, çак çунăк билет кăна тăрса юлнă.

* * *

Халăх ĕçĕшĕн çапăçса пуçа хунă çыннăн пурнăçĕ нихăçан та çухалмасть. Петр Пугачевăн чаплă вилĕмĕ çинчен унăн çывăх юлташĕсем Елчĕкри комсомол организацине çакăн пек çыру çырса янă:

«Çак комсомол билетне эпир шурă финсем чĕреллех çунтарса янă красноармеец Пугачев гимнастерки кăсйинчен кăларса илтĕмĕр. Вăл пирĕн чаçре служить тăватчĕ. Ăна, Хабеков капитанăн гвардеецĕсемпе пĕрле, каялла таракан финсен çулне пӳлме янă пулнă. Çак танмар çапăçура вăл паттăррăн çапăçса пуçне хунă; финсем ăна чĕреллех çунтарса янă. Анчах та вăл командир приказне чыслăн пурнăçларĕ.

Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ӳстернĕ çынсем яланах çапла çапăçаççĕ. Мухтавлă гвардеецсем çапла чаплă вилĕмпе çеç вилеççĕ.

Эпир хамăр юлташ вилĕмĕшĕн тăшмана хаяррăн тавăрăпăр. Пугачев юлташăн ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн хушăмăрта вилĕмсĕр пулĕ».

(Сакăрвун тăхăр çын алă пуснă).

Итле, вулакан юлташăм! Çамрăк-и эс, ватă-и, фронтра-и эс, тылра-и, — çак пĕчĕкçĕ кĕнеке юлашкийĕ çине тепĕр хут пăхса ил те, чышкусене чăмăртаса, пурнăç хĕвелĕ ячĕпе, çуратса ӳстернĕ тăван çĕр ячĕпе çапла тупа ту:

— Тавăрăпăр хура юнлă тăшмана! Каçару пулмĕ пирĕн пурлăха хапсăнса килнĕ выçă куçлă кашкăра! Хăйĕн йăвине хăваласа кĕртсе, юлашки тăхăмĕ юлмиччен пĕтерсе тăкăпăр эпир вăл ирсĕрсене. Хаяр аçа çиçĕмĕпеле çунтарса ярăпăр вăл ылханлă ăрăва. Мĕнпур вăя хурăпăр çĕнтерӳ тума: фронтра — вутпа та хĕçпе, тылра— хĕрӳллĕ ĕçпе.

Эпир Пугачев юлташăн юлашки асапĕсем çинчен пĕлместпĕр. Унăн кăсйинче çунса пĕтмесĕр тăрса юлнă комсомол билетне кайран юлташĕсем кăларса илнĕ. Таса чунлă çамрăкăн пурнăç путевкине тăшман вучĕ те кĕллентереймен, мĕншĕн тесен вăл çамрăк хăйĕн тăван Çĕршывĕн, тăван халăхĕшĕн арăслан пек çапăçнă, вилĕмĕпе вилĕме çĕнтерсе, ĕмĕр вилĕмсĕр ята кĕрсе юлнă.

Пугачев юлташ Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпара 1925 çулта çуралнă. Вăрçа кайччен çиччĕмĕш клас вĕренсе пĕтернĕ пулнă. 1940 çулта комсомола кĕнĕ.

Елчĕкри комсомолецсем гвардеецсен çырăвне районри пухура сӳтсе-явнă. Вĕсем хăйсен тантăшĕн Петр Пугачевăн фронтри тусĕсем патне çакăн пек ответ çырса янă:

«Хаклă юлташсем! Эпир, Елчĕк районĕнче пурăнакан комсомолецсем, сирĕн çырăвăра районри пухура вуласа патăмăр, финсем чĕрĕлле çунтарса янă гвардеец Петр Пугачевăн комсомол билетне пысăк хумханупа пăхрăмăр. Çав тери кăмăла хуçса кайрĕ пирĕнне ку йывăр хыпар. Çав тери хĕрхенетпĕр эпир Петр Васильевич Пугачевăн вăхăтсăр татăлнă пурнăçне. Ун çинчен каласа пама сăмах та çитмест.

Хаклă юлташăн вăхăтсăр вилĕмĕ пире, тылри комсомолецсене, тăшмана хаяррăн тавăрма чĕнет. Эпир, Петр Пугачев ячĕпе тупа туса, фронта мĕн кирлине ытлашшипех парса пыма, колхозра большевикла хастарлăхпа ĕçлеме сăмах паратпăр. А эсир, фронтри гвардеецсем, алăри хĕçпăшалпа нимĕн каçарусăр тавăрăр тăшмана!»

(Елчĕк районĕнчи комсомолецсем алă пуснă).

Нихăçан та манмĕ Тăван çĕршыв хăйĕн чаплă ывăлне, паттăр комсомолеца Петр Пугачева. Халăх чĕринче ун таса ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр, сӳнми хĕвел пек, йăлкăшса тăрĕ.

Илья ТУКТАШ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00700. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л, Тираж 16.000 экз.